Ч(Ч48)
Ю 73
16256. чув.

Анатолий Юман

# ТЕЛЕЙ СĂПКИ

Национальная библиотека ЧР

4-016256

…КА ВОЗВРАТА

…ЖНА БЫТЬ
… НЕ ПОЗЖЕ
… ЗДЕСЬ СРОКА

Колич. пред. выдач

м 16256 чув

1Чф
К С(ЧЧВ)
Е 73

АНАТОЛИЙ ЮМАН

# ТЕЛЕЙ СӐПКИ

Поэма

ЧӐВАШ АССР КӖНЕКЕ ИЗДАТЕЛЬСТВИ
Шупашкар — 1972

С (ЧУВ)
Е 73

м 16256 чув

Ермилов—Юман Анатолий Федорович

КОЛЫБЕЛЬ СЧАСТЬЯ

Поэма

ПРОВЕРЕН
20 10

На чувашском языке

Редактор **Г. А. Ефимов**
Художник **Ю. И. Богдяж**
Художественный редактор **Е. Е. Михайлова**
Технический редактор **А. Ф. Никитина**
Корректор **Р. Я. Семенова**

НТ 10346. Сдано в набор 25/VIII-1971 г.
Подписано к печати 24/VII-1972 г. Изд. № 61/71 г.
Формат 60×84/32. Бумага типографская № 2.
Физ. печ. л. 1,75. Усл. печ. л. 1,62
Учетно-изд. л. 2,12. Заказ № 4373.
Тираж 2000 экз. Цена 26 коп.

Чувашское книжное издательство,
Чебоксары, пр. Ленина, 4.

Типография № 1 Управления по печати
при Совете Министров Чувашской АССР,
г. Чебоксары, Володарского, 5.

**7—4—3**
**61—71м**

Республиканская
библиотека
им. М. ГОРЬКОГО
Чувашской АССР

Хăрушăччĕ, йывăрччĕ...
Кам чăттăр? —
Чăтса çав, тӳссе çав
çавах.
**Н. Ваçанкка.**

## 1.

Ĕçчен те пултаруллă Хĕл мучи
Кантăксене шур мĕлкĕпе тĕрленĕ;
Йĕпеннипе хуралнă пӳрт маччи,
Тумла тумланипе урай йĕпеннĕ.
Анчах та Хĕл мучи тĕрри сынна
Савăнтармасть питех хитре пулсан та.
Тумтир хывса ларасчĕ пĕр кана —
Ăшша тытмасть шăнса пăрланнă кантăк.
Мачча кашти ярăнтарать сăпка.
Ача йĕрет. Ун амăшĕ салхуллă.
Çапах та вăл хăй ывăлне лăпкать
Е пуплешет унпа:
— Хăçан сын пулăн?
Ӳссем, пепкеçĕм, пысăк, пысăк пул,
Ун чух вара пире те пулĕ çăмăл.
Сана хавхалантартăр аслă çул,
Шăпу çине пăхсассăн тултăр кăмăл...

Эс кур-ха: амӑшне ӑнланнӑ пек,
Ачи тӑнлать ӑна. Халь вӑл шӑпланнӑ.
Ун куҫӗсем кӑна ҫаплах йӗпе,
Таса тумлам — куҫҫулӗ шӑрҫаланнӑ.
Ҫулла, хӑш ир, чечек ҫинче ҫапла
Ялтрать тумлам, хӗвел пӑхсан та ӑшшӑн.
Тен, амӑшӗ салхуланса шутлать:
«Шӑпи мӗнле-ши пӗчӗкҫӗ чӑвашӑн?»
Сасартӑк вӑл пуҫларӗ каласма,
Телейлӗ, тутлӑ ыйхӑран вӑраннӑн:
— Ыран — пасар... Илтетӗн-и, Куҫма?
Пур-ҫук вӑй-халпалан ӗне усраймӑн.
Чӑнах та, кирлӗччӗ пире ӗни:
Алри ача. Ӑна кирлех сӗт-турӑх.
Ҫапла ҫав хӗсӗк пурӑнӑҫ тени,—
Пӗр шӑтӑка саплан — сан урӑх ҫурӑк.
Ути те, уламӗ те кӑйттӑрах,
Пӗр пуленке юлмарӗ вутӑ-шанкӑ.
Кантурӗнчен те тур сыхлатӑрах,
Унтан килсен ӳте сӗвеҫҫӗ акӑ.
Халех илме пуҫларӑмӑр кивҫен.
Мӗнле кӑна кун-кунласа пурнар-ши?
Ҫӗн тырӑччен кӗтмешкӗн пит инҫе...
Ӗне сутса йӳнеҫтерсе пӑхар-ши?

Ҫапкаланса сасартӑк сиресрен
Праски Эпти кипкисене юсарӗ.
Пӗр шӑрчӑк ҫеҫ чӑрларӗ кӗтесре,
Карма ҫӑвар — ҫаплах вӑл чарӑнмарӗ.

Çич пушăтлă хитре çăпатине
Тирсе ларан Куçма шăпах çĕкленчĕ.
Хăй шухăшне пĕлтерчĕ вăл тинех:
— Шăтăксене кăшт питĕрме çитсенччĕ..
Эпти валли илес хуть качака,
Ун сĕчĕ усăллă, сахал та — юрĕ.
Качакасем кăшт йӳнĕ пулакан.
Пăхма ансат. Çĕрулмипе те тăрĕ.

Унтан вăл пăхăр пуçлă чĕлĕмне
Енчĕкĕнчен хаяр табак тултарчĕ,
Хăнăхнăран, чĕри выртман енне,
Чĕлĕм чĕртсе пĕр си мăкăрлантарчĕ.

2.

Автан çунат çапсассăнах Праски
Хăй мăшăрне те ыйхăран вăратрĕ.
Васкавлăн тăчĕ унăн упăшки,
Вара çула хатĕрленме тапратрĕ.
Тăла-чăлха, вĕр-çĕнĕ çăпата,
Çатăртатать кăна пĕр утнă майăн.
Ура сырсан илемлĕ мар-тăр та, —
Хресчен ырмасть, утмашкăн çăмăл, лайăх.
Хутаççине вăл чикрĕ çăкăрне,
Пĕр татăк çу илсе пирпе чăркарĕ.
Тинкерчĕç те алхапăл пĕр-пĕрне,
Праски куçран пăхса хуллен каларĕ:
— Май пур таран сутсам ĕнтĕ хакла...—
Сасартăк унăн куçĕсем шывланчĕç.

Упăшкине ăс вĕрентсе çапла,
Çула вăл ăсатмашкăн хыпаланчĕ.
Ăш сĕт шăрши кĕрен хуралтăран
Праски салхуллăн ĕнине кăларчĕ.
— Хушка, мĕскершĕн эсĕ хуйхăран? —
Ăна юлташĕ пек вăл саса пачĕ. —
Сана сутма илсе каять Куçма.
Мĕнле, мĕнле çын аллине эс лекĕн?
Чĕлхӳ кăна çук санăн калаçма,
Ху шăпуна йăлтах, йăлтах пĕлетĕн!—
Пăшăлтатса кĕлтурĕ те турра,
Чĕптĕм кăна ĕне çăмне лăскарĕ.
Йăли авалтанпах çапла пырать —
Сана ыр пӳлĕх ӳлĕм выльăх парĕ.

* * *

Ирех кĕрлет, ирех шавлать пасар,
Ватти-вĕтти те хĕвĕшет хавассăн.
Пĕрне тепри калать: «Йӳне,— тет, — пар».
Ыйтать вăл хаклă, хăй сутас пулсассăн.
Туянмалли çук мар вара кунта,
Кĕсйӳ кăна ан пултăр санăн пушă.
Купи-купи çĕн çăпата выртать,
Тĕрки-тĕрки тирпейлĕн сӳнĕ пушăт.
Шуç пăтавкка, чӳлмек тавраш, витре—
Хуçалăхра вĕсем питех те кирлĕ.
Пасар — пуян, япалисем — хитре,
Çăт-çат тăваççĕ алăсем çеç вирлĕн.
Лавккисене, лавккисене пăх-ха:

Кĕпе те йĕм, кĕрĕк-сăхман куратăн.
— Укçа парсассăн пурте-çке ахаль, —
Шўтлет лавккаç, сĕнет пушмак та атă.
Укçа пулсан — канфет, пĕремĕк çи.
Вут-шанкă та укçа пулсассăн хатĕр.
Анчах та çук-çке, çук-çке вăл укçи,
Яка кĕсъешĕн кам-ха, кам мĕн патăр!
Хĕн пурăнăç тесе йĕрес-и-ха,
Яш ĕмĕр хăй сўнми телей пулсассăн? —
Сарă хĕрсем пĕр хĕвĕшеççĕ халь, —
Тумлам шывпах туйнать çăтса ярассăн.
Черченкĕ пилĕклĕ тăрать пĕри,
Сăнран — хитре, ун куçĕсем те чĕрĕ.
Сĕтĕрĕнет çĕртен арăк хĕрри,
Пўрни çинче çиçет çап-çутă çĕрĕ.
Мăн кăмăлпа пăхать сынсем çине,
Терт тенине ăçтан-ха вăл ăнлантăр,
Пĕве çитсе хăй улăм пĕрчине
Çинçе пўрнисемпе илсе хуман-тăр.
Яра куна шавлать кунта хупах —
Укçа пулсассăн кам кĕмесĕр тўсĕ.
Хăйне йăлт çитнĕ, ав, кĕрет çапах,
Тайкаланса татах кĕрет пĕр ўсĕр.
Ун арăмĕ çулне пўлсе хурать,
Алкумĕнче тăрать çак мĕскĕн арăм.
— Кўртместĕп, çук! — тесе вăл кăшкăрать.
Çав ўсĕре епле эс тытса чарăн!
Ларать, ав, çывăхрах ыйткалакан.
Пăхмашкăн йывăр: ик ури те татăк.

Кăкри çинче хĕрес. Хăй пит хыткан.
Çипуçĕ те старикĕн çĕтĕк-çатăк.
Яш чух вăл пулнă-тăр хастар, патвар.
Патшашăн, тен, тăшмансене хыт ирнĕ —
Ахальтен мар кăкри тăкать кăвар! —
Паян çапла шăпа курмашкăн тивнĕ.
Куçран тархасласа пăхать салтак:
Умри карттус çине çур пус кам хурĕ?
Укçа пулсан хресчен парать пăртак,
Пуян сана лачлаттарса çеç сурĕ.

Çынсен шăв-шавĕнчен аяккарах
Хĕрсех пырать ĕне-лаша пасарĕ.
Куçма кунта тăрать-мĕн пеçăрах,
Ун Хушкине темиçе çын куçларĕ.
Туянакан тупăнаймарĕ тем?
Кайрантарах сутмашкăн пурпĕр тивĕç:
Малтан пасар хакне пĕлет этем,
Ун хыççăн тин ална çапса эс килĕш.
— Йысна, мĕн хак ыйтатăн ĕнӳне?
— Вунтăххăра — каларăм-çке, чакмастăп.
— Çук, апла мар, пăртак кăна йӳнет.
— Ени аван. Вăл йӳн... сĕтне шутлас-тăк.
— Апла пулсан тавай вунсаккăра.
Халех илетĕп, ална пар, юлташăм.
— Вунсаккăр-тăк вунсаккăр — мĕн вара?
Ак аллисем пĕрлешрĕç ик чăвашăн.
Шухăшлани ун пулчĕ: ĕнине
Сутса Куçма ĕçне-пуçне пĕтерчĕ.

Сутмашкăн питĕ çăмăл пуррине,
Илме тăрсассăн çеç ун пысăк терчĕ.

3.

Черечĕпе ак çитрĕ çуркунне.
Малтан сăрт-ту çамки юртан тасалчĕ,
Унтан хресчен хирне те çаранне
Хĕвеллĕ кун хитре хура сăн пачĕ.
Каçкўлĕм килчĕ кўршĕ Митрахван.
Куçма, Праски унпа питех те туслă.
— Мĕнле халсем?..
— Тавтапуçах, аван...
— Манăн килес!.. Апачĕ пултăр тутлă.
— Ларсам пирĕнпеле апатланма...
Праски пĕçернĕ яшкине пит селĕм...—
Ĕç çук чухне, çапла, юмахлама
Çўрет старик. Туртма хавас хăй чĕлĕм.
— Пĕлетĕн-и, ыран ирех хире
Çĕр уйăрма ялйыш тухать, атьсемĕр.
Мана каларĕ теçетник Ахтимĕр,
Виç ят тивмешкĕн тивĕç-ха пире...

Мăйракари хăватлă пăрăça
Салма çине тытса силленĕ майăн,
Итлет Куçма пăртак пуçне пăрса.
— Стражникĕсем те килнĕ, тет, нумайăн.
Начар хыпар. Имет ик-виç ятак
Туканасран илсеччĕ йўнĕ хакăн.
Ят уйăрсан ăна — шĕшлĕ аври...

— Так, так...
— Чĕрре вăл кĕрĕ...
— Çук пуль...
— Курăн акă!
Имет çилленнĕ теççĕ çав тери...
— Çĕр уйăрма пире Имет чараймĕ,—
Калать Куçма. Хăрать Праски чĕри:
— Куштансенне çулне пӳлсе хураймăн.
— Куннĕхинче ят хушăнĕ-ха теп,
Вăталăххи те ӳссе çитрĕ акă.
Ун чух телей пулать вара килте.
Тинех пирте те татăк тăмĕ çăкăр...
Çапах шута каять шур çӳçлĕ пуç,—
Ăна шăпа сахал-и улталанă.
Туман тиха ыр пилĕкне ан хуç,
Çакна çынсем пĕлмесĕр-и каланă.

* * *

Ят уйăрмашкăн мелĕ пит ансат:
Витре ăшне тултар ятарлă шакă,
Пĕрне пăхмасăр ил те, кĕлтуса,—
Шăпа пӳрсен телей те лекĕ акă.
Начар ана лексен те эс шăплан.
Шăпи çапла, ăна пыраймăн хирĕç...
Кашни шутларĕ те паян çапла,
Ана пуçне чылай хутларĕç, виçрĕç.
Куçман сасси янравлине кура
Ялйыш хушать ăна шăпа тытмашкăн.
— Ялйыш шансан,—тет леш,—тытма юрать,

Тăраймăн тавлашса ялйыш шансассăн.
Карттус хывса кĕлтурĕ те Куçма
Хуллен-хуллен витре патне çывхарчĕ.
Вара шакмаксене арпаштарма
Алла витренелле вăл чиксе ячĕ.
Халь шакă çыншăн — шĕвĕр йывăç мар,
Вăл — çăкăр та кулачă, тулăх çĕр.
Вăл — çăпата, кĕпе валли пусма,
Вăл выç хĕл мар, вăл — тулăх, мăнтăр кĕр.
Куçма туртса кăларчĕ аллине...
— Çĕр çирĕммĕш! — хыпар тăвать мăнаçлăн.
Пĕлтерчĕ ку «телейлĕ» тенине, —
Халь Митрахван та лайăх çĕрлĕ, ятлă.
— Çук, тĕрĕс мар, памастăп хам çĕре!
Ăна укçа парса саккунлă илнĕ!..
Кăна Имет иккен чĕрре кĕрет,
Çĕрме пуян çилли каппанса килнĕ.
— Лăплан, Имет... Хуçи халь çук ялта,
Тӳленĕ ят халь хăй вăйне çухатнă.
Старикĕ айăпсăр, шăпа тытать, —
Кӳршине май Куçма сăмах хускатнă.
— Сана мĕн кирлĕччĕ, çара çерçи!
Тасал умран!.. — пӳлет Имет çиллессĕн.
Кунтах тăрать иккен пуян тарçи,
Куçма ӳкет вăл чышкăпа илсессĕн.
Капланнă эрлĕке епле тӳсес?
Куçма сиксе тăрать те васкамасăр,
Сулса ярать ак вирлĕн эхлетсе,
Куштансенчен пĕрре те хăрамасăр.

Çак самантрах çитеççĕ стражниксем,
Нухайкисем пĕр шелсĕр шăхăраççĕ.
Куçма аллисене çыхса вĕсем
Ăна трантас çине илсе хураççĕ.
Тар мар йĕпетнĕ çурăк кĕпене,
Юн сăрхăнса çанçурăма йĕпетнĕ.
Пăхсассăн—çыннăн чунĕ çӳçенет,
Хĕсĕннипе кив алăк чĕриклетнĕн.
Шăв-шав çине чупса çитет Праски,
Ал-урине унне инкек тăллана.
Трантас çине пăхать — ун упăшки.
Пит-куçĕ те Куçман йăлтах юнланнă.
— Мĕн турĕç тăшмансем сана, Куçма! —
Хӳхлет Праски, хăй ун патне иртесшĕн.
Анчах стражник памасть ăна утма,
Тĕксе ӳкерчĕ акă, мур илесшĕ.
Çакна курса Куçма шăлне сыртать.
Тапаçланать — вăй-хал пĕтмен-ха унăн.
Хăй арăмне çапах та йăпатать:
— Ан йĕр, эп таврăнăп, лăпланччĕ, чунăм.
Хресчен кăкăрĕнче çунать кăвар.
Куçма хутне кашни кĕмешкĕн хатĕр.
Анчах шутлать: «Стражник, ами, шӳт мар,
Яла-йыша серепене çаклатĕ».
Çын ушкăнне сиреççĕ те малтан,
Хăшне саламатпа та çунтараççĕ...
Стражникĕсем иртмешкĕн çул тăваççĕ,
Çатан трантас хускалчĕ вырăнтан.
Малта каçăрăлса ларать юпа.

Вăрман кати курнать тата пĕр йăрăм.
Мăн çулпала ӳке-ӳке чупать,
Çаплах чупать Праски — пĕччен хĕрарăм:
Пĕр кун иртет çапла, иртет эрне,
Праски пĕччен лара-тăра пĕлмерĕ.
Куçма çаплах-ха таврăнмасть килне.
Элле турри усал шăпа пиллерĕ?
Нумай сăмах-юмах çӳрет ялта:
Пĕри калать: ăна такам кăнтарнă.
Теприн сăмахĕ витĕрех шăнтать,
Хăшĕ-пĕри вĕри куççуль кăларнă.
Çапла калакансем те пур иккен:
Куçма вилмен, тĕрĕс-тĕкел те сывă,
Ал-урине сăнчăрласа илсен,
Инçе Çĕпĕрелле ăсаннă сын вăл.

4.

Пĕчĕкçĕллех тăлăх-турат ятне
Ача-пăча тени нихçан ан илттĕр,
Вăл пĕлтĕр, туйтăр ашшĕ çунатне,
Амăш ытамĕнче вылятăр, сиктĕр.
Хăш чух шăпа калама çук хаяр...
Пĕччен юлсан Праски нумай хӳхлерĕ.
Ун тутăрне йĕпетрĕ-çке шыв мар,
Вĕри куççулĕ ислетсе йĕпетрĕ.
Хĕрарăма кам сутăр-ха сума?
Пĕчченçĕ пурнăç эрĕмрен те йӳçĕ,
Килкартинче пĕр выльăх та юлман...

Хуйха пула Праскин шуралнӑ ҫӳҫӗ.
Ӗнсе ҫине тиеннӗ-ҫке нуша,
Пӗччен чӑтмашкӑн вӑй сахал-и кирлӗ?
Халь пӳрт те туйӑнать ӑна пушах...
Пӗр хал та ҫук, вӑрах выртайнӑн чирлӗ.
Пуҫа усса тек ларӑн-и элле?
Анне чӗри тени епле-ха тӳстӗр?
Тӳсме те, ун кӗтме те пӗлмелле —
Чӗппи ҫеҫ шухӑшсӑр, телейлӗ ӳстӗр.
Ӑҫта чикес, ӑҫта хурас пуҫа?
Кайран шутлать ялтан тухса каймашкӑн.
Ҫуртне хупать Праски, кӗршет тарҫа,
Улпут патне кӗпе ҫуса тӑмашкӑн.

## 5.

Сӑр тусанлӑ ҫулпала
Кунӗпе утса ыратӑн —
Тин вара эс пӗр яла
Умӑнта курах каятӑн.
...Пеляккух улпут ятне
Таврара кашни пӗлеҫҫӗ.
Ютрисем те ун патне
Ҫулсерен килсе ӗҫлеҫҫӗ.
Кӗтӳпех тытать лаша,
Кӗтӳпе ӗне те сурӑх.
Ӳнпа кам-ха тупӑшать?
Ун пекки тупаймӑн урӑх.
Ҫурт-хуралтӑ таврашне

Шăтăрнак хитрен тыттарнă.
Тарçă-хресченсен тарне
Вăл мĕн чухлĕ-ши юхтарнă?
Симĕс пурçăн чатăр пек,
Йывăççем çурта пĕркеççĕ.
Ярăнмашкăн кимĕпе
Кўлĕ те чавтарнă, теççĕ.
Хĕр чухне Праски кунта
Тыр вырма та килкеленĕ.
Курнă çавă улпута,
Вырăсла та перкелешнĕ.

* * *

Ылмашăнаççĕ кун та çĕр, эрне...
Ĕçре иртет-çке вăхăт сисĕнмесĕр.
Тăвать Праски улпут мĕн хушнине,
Ĕçлет куллен, лаша пек, ўркенмесĕр.
Кун иртнĕçем самайланать Праски,
Хĕр чухнехи хитре сăн килнĕ евĕр.
Пўртре текех сикмест ача сăпки,—
Эпти ўссен телей те килĕ, чимĕр.
Ĕнтĕ Эпти урамалла чупать,
Лара-тăра пĕлмест вăл: шухă, йăрă.
Амăшĕпе пакăлтатса супать,
Култарĕ те, тепре вăл кўрĕ тарăх.
Тепĕр чухне ярать кантра хыпса:
Пуçне ухать, ут пек чупма та хатĕр.
Пăхса тăмашкăн кăмăлу пулсан,
Çилтен те хăвăртрах чупса кăтартĕ.

Ырлăха мар иленнĕ çурт тăрне
Тăманасем, çĕр каçиччен уланă.
Ухмах пуçпа вĕçем тем тишкернех,
Инкек пулассине малтан чухланă.
Пĕррехинче, ĕçрен ырса кĕрсен,
Праски канма шутланă, вырăн сарнă.
Ун хыççăн кĕç, каçхи апат çисе,
Хăй Эптине ачашшăн сывăрттарнă.
Сасартăк алăк уçăлнă яри,
Праскин чун-чĕрине шартах сиктернĕ.
Курнать хуçан çут атăллă ури...
Хул хушшине чеен хăй тем хĕстернĕ.
Кўрет, тен, кучченеç. Туять Праски.
Пĕркун çапла... Килкартине тухсассăн,
Тĕл пулчĕ ăнсăртран вăл... Аш татки
Курсан, кушак çўрет-çке тутанасшăн...
Çав кунтанпа вăл явăнать ялан,
Ăна юри, тен, хăварасшăн чыссăр?
Йытта — хăвма пулать сăмахпалан,
Арçын ерсен — патак тытни те уссăр.
— Тăнла, тархасшăн, турă пул, хуçа!
Кайран мĕнле çўрес ял умĕнче?
Хĕрхен мана, ан сиччĕ ман пуçа...
Леш пур, çаплах хĕрарăм çумĕнче.
Алне пăхать унта-кунта яма,
Ăна сăмах-и ўкĕте халь кĕртĕ!..
Çитмерĕ вăй
Вăя тытса чарма,
Вăраннă туйăм намăса çĕнтерчĕ...

Праски пĕччен юлсассăн ĕсĕклет,
Куççуль çăвать питне кун иртнĕ майăн.
«Куçма та кĕç ак таврăнĕ киле...
Ун умĕнче мĕнле ман пысăк айăп!
Çак намăса мĕнле, мĕнле чăтас?
Нивушлĕ пŭлĕхçĕ телей пŭрмен-ши?
Мĕскер эп тунă? Мĕншĕн? Мĕншĕн?
Мĕншĕн?..»
Пин-пин ыйту кăшлать чун-чĕрине.
Тупсăмсене ăçтан тупма пултарăн?
Хŭхлет Праски, чĕри тŭсмен енне,
Куллен çапла тăкать куççуль, мăнтарăн.

. . . . . . . . . . . . . . . .
. . . . . . . . . . . . . . . .

Çăва тухсан, ача пăрахнă чух,
Праски вилни çинчен шавларĕ халăх:
«Унпа çыхланнă пулнă Пеляккух...»
Уй — куçлă теççĕ те, вăрман — хăлхаллă.

6.

Тарçипеле пĕрле ларать Имет.
Ун сăхă куçĕсем кăвар пек хĕрнĕ.
Лĕрккет те черккерен — куçне хĕссе илет,—
Мĕскершĕн-ши паян ĕçке вăл ернĕ?
Сар мăйăхне илет те пĕтĕрсе,
Чапăрккалла авса хурать пĕр хушă.
Çын тупсăмне тŭп-тŭррĕн пĕлтерсе




Республиканская
библиотека
им. М. ГОРЬКОГО
Чувашской АССР
ш 16256 чув

Ахальтен мар ялйыш ят панӑ «Пушӑ» *.
«Ċакай тулли вӗшлетӗр ачапча»,—
Туйра пехиллени пӗлсе каланӑн
Тӳрре пит килнӗ. Леш кайран час-час
Ачин ячӗсене те арпаштарнӑ.
Матки вилсен авланнӑ ҫӗнӗрен,
Ача туман хӗрарӑма шыранӑ.
Ҫӗн арӑм иртнӗ пулнӑ хӗрӗхрен —
Кӗтмен ҫӗртен ача ҫуратнӑ панӑ.
Ҫӳпҫи пек, теҫҫӗ ҫакӑ хупӑлчи —
Яш пулмасассӑн та пӗррех туллашнӑ.
Ҫитӗннӗҫем Имет ачи-пӑчи
Килтен тарса тӗнче хутланӑ, каснӑ.
Юлашкинчен ҫапах юлать пӗри,
Амаҫури ачи, курпунлӑ Петӗр,
Халь амӑшӗ ӑна — сисетӗр-и? —
Авлантарать. Хуҫа тума шутлать-тӗр.
Анчах киле мӗнле-ха хӗр килет?
Пуҫтах, лӳппер, услап ӳсет ҫак каччӑ...
Ҫавӑнпала, тарҫи кӗрсен, Имет
Алӑк хупса, ӑна ҫаклатрӗ тачӑ.

Имет

Ялта, паллах, тупаймӑн хӗр тавраш —
Пурте пӗлеҫҫӗ...
Калама ҫеҫ янтӑ.

---

* Кунта чӑпӑркка тесе ӑнланмалла.

Трахвин

Кӳрше эппин, кӳрше вăлта ярас?

Имет

Сăнран пăхсах килĕшес çук унта та.

Çамка тирне пĕрсе илет хуçа,
Чăпăк вĕçне кăшлать, туртать те чĕлĕм.
Еçĕ ăнсан пама пулать укçа,
Туй пултăр, тет, пĕр асăнмалăх селĕм.
— Пастай, пастай, — канаш парать тарçи,—
Ман пуçăмра çуралчĕ ырă шухăш:
Ун вырăнне яратпăр урăх çын;
Паллах, тăккаланас пулать те... Ну, кăшт...
Хĕве хупса хурсан, кайран унта,
Усал хĕртен те пулĕ селĕм арăм.
Малтан кăраччĕ хамăн арăм та,
Вĕçелиса эп вăйăран вăрларăм.
Йăли çапла вĕсен, хĕрарăмсен,
Турти кĕске, пуçĕсенче — пуш-пушă.
Çавралăхне хытах туртса илсен
Тинех уссийĕ пулĕ уншăн, хушăн.

Халь савăнса кулса ярать Имет:
— Вăт санăн пуç, Трахвин, эп шутламанччĕ!
Анчах та кам-ха кайĕ хĕр илме?
— Кунта шутлас пулать, Имет Йăванччă!

## 7.

Авал пĕлсе каланă ваттисем:
«Сывви — ўсет, вилни çĕрет вăл», тенĕ.
Чун пултăр çеç, чул хушшинче тўсен,
Яш чух вăй-хал та сывлăх пур этемĕн.
Калча пек сарăлса ўсет Эпти.
Хăй амăшне аран кăна астунă.
Асламăшĕ патне куçсассăн тин
Ăстăн çирĕпленме пуçланă унăн.
Çичче çитсессĕн хуçнă çăпата,—
Вăл ачаллах ĕçре пиçсе туптаннă.
Тырпул пиçсессĕн пусăра тата
Асламăшпе каçалăк та пуçланă.
Анчах алри ывăçпала пĕрле
Çурла шăлне кĕрет кача пўрне те.
— Ан йĕр, ачам, — асламăшĕ шеллет,
Ăна курмашкăн пўрнĕ-çке пурне те. —
Авланиччен ўт илĕ-ха йăлтах...—
Пир аркине пăртак туртса çурать те
Пырса çыхать асламăш. Хăй татах
Екки кайса ĕçлет. Ĕçлет Эпти те.
Пăртак ўссен — çўренĕ выртмана,
Лашасене тантăшсемпе иленнĕ.
Вучах умне ларса вăл пĕр кана
Юмах-халап итле-итле киленнĕ.
Ĕçре хул-çурăм тĕрекленнĕ ун,
Ĕмĕр сакки пĕр сарăлса пыруçăн
Яш ўт-пўре вĕренĕ харсăр юн,

Йĕркеллĕ аталаннă ун ăспуçĕ.
Кун хыççăн кун иртет, çул хыççăн çул...
Раштав çитсен Эпти тултарнă çирĕм.
Ун чĕрине пусман-ха йывăр чул,
Ĕмĕтпелен туслашнă каçăн-ирĕн.
Паян Эпти сухаласа килсен,
Апатланса пăртак канмашкăн выртрĕ,
Такам мĕлки килкартине кĕрсе
Çенĕкелле васкавлăн, сассăр иртрĕ.
Ют çын пулас — пĕр хушă хăлăпа
Аллисемпе кăштăртатса шырарĕ.
— Аван-и? — чĕнчĕ ырă йăлапа.
Эпти тинех хай Трахвине палларĕ.
Сăмахăн енчĕкне салтма тăрса
Трахвин йăпишĕн ўсĕрчĕ те кулчĕ,
Калаçăва ăстайлăн кукăртса
Хирти ĕçсем çинчен ыйтанçи пулчĕ.
Чи кирлине пуçларĕ тин Трахвин:
— Шатраллă Петĕр пĕр хĕре куçларĕ.
Имет килне кĕртесшĕн харсăр кин,
Леш тăмсайне ыр çын мĕнле хĕр парĕ?
— Вара? Мана мĕн! — пўлчĕ çеç Эпти.
Трахвин татах палкарĕ те палкарĕ.
Эпти вара ăна ăнланчĕ тин,
Пĕр хушă вăл-та, ку та шарламарĕç.
Эпти ахăлтатса ярать: — Ха-ха!
Эсир хĕре сĕрекепе тытасшăн.
Мана хуратăр пулĕ ухмаха,
Хĕр çураçма ярасшăн, йыт туртасшĕ!

— Ăнланаймарăн ахăр эс мана.
Ма ухмаха хурас? Хĕр вăрламастпăр.
Пурте йĕркеллĕ пулĕ, шан, чăнах.
Ку — кулăш çеç. Сана ахаль тумастпăр...
Хăй кĕсйинчен кăларнă сăмакун.
«Чĕлхе пăртак çемçелтĕр», текеленĕ.
Кайран укçа та сĕннĕ.
Ак — саккун
Вăрăмтуна пек сăхă пуянсенĕн.

8.

Сенкер тӳпе... Пăхсан киленмелле.
Хĕвел çиçет. Вылять хум шăпăл-шăпăл.
Çурхи тĕнче хăй илемне элле
Этемшĕн шеллĕ-и? Çынна вăл хапăл.
Пăхатăн та умри тĕме çине —
Кăткă таçтаваскать, хăй темĕн йăтнă.
Кăпшанкă та хавас çуркуннене,
Тавралăх ешерет ытла та хăтлăн.
Пӳрне çинче кăпшанкă — «кукамай»...
(Пирте темме ăна çапла калаççĕ.)
— Вĕç, кукамай! — тесе каланă май
Чăпар çунаттисем ун саралаççĕ.
Йăмра çине йăва тума курак
Суйлать хăйне кура пит меллĕ вырăн.
Çуртне вăл тăрăшса куллен — хайлать —
Чĕпсем валли хуралтă пултăр ырă.
Типтерлĕ шăпчăк та каçса кайса

Концерт парать, юрлать вăл уçă саслăн.
Программи унăн кивĕ, шутласан,
Апла пулсассăн та итлен хаваслăн.
Шап-шур халат пĕркеннĕ улмуççи —
Кĕркуннепе улми пит тулăх пулĕ;
Ун чух килсессĕн эсĕ тат та çи, —
Чие-çырла та йышлă пулĕ ўлĕм.
Ирпе кăвак тĕтре йăсăрланать.
Тавралăха карса илет те акă
Çўхе чаршавĕ витĕр курăнать
Хĕвел шевли те, йывăç та кăваккăн.
Çурла пек уйăх тўпене тухсан,
Çурхи тĕнче те, сывлăш та йăлт урăх.
Ахальтен мар карталанса тăрса
Хĕрсем юрлаççĕ чи илемлĕ юрă.
Тырпул ăстишĕн çуркунне — ĕççи.
Кал-кал сывлать питне тин çунă хирĕ.
Чуна хăпартлатать çерем кĕççи,
Калчаланать куллен тулли те вирĕ.
Хĕвел ун чух та пăхнă çакнашкал,
Çурхи тĕнче çиççе вылянă, кулнă,
Тавралăха вăл панă çĕнĕ хал,
Ем-ешĕл тум та хатĕр пулнă унăн.
Хăва та, курăк та, мăнаç çаран
Сип-симĕс сăн илсе чипер ешернĕ.
Ача-пăча хавасланса çарран
Екки ярса вăй вылямашкăн ернĕ.
Çунат çапса юрланă кайăксем,
Сĕм авалхи юррисене ĕнернĕ.

Анчах та пурнăç, пурнăç этемсен
Шăп эрĕм тутине аса илтернĕ.
Савăнтармасть çурхи илем çынна
Шăпа кăштах телей пÿрмен пулсассăн.

Саратайри сăртран каçсассăнах
Ума тухса ларать пĕр пĕчĕк касă.
Çук, касă мар. Вăл кÿршĕ ял çапла
Сăртран кăна курнать кĕске те ансăр.
Ун çуррине ытла вăрман хуплать,
Ял курăнмасть патне пырса пăхмасăр.
Вăрман ял хĕрринчех пулсассăн та
Çуртсем кунта лараççĕ тăйлăк-тайлăк.
Çаралнă мăкı ăшша начар тытать.
Ял сăн-сăпачĕ унăн халĕ шайлă.
Ял варринче кăна кантур пек çурт...
Каллех кулак çинчен тесе ан калăр.
Пуçласшăнччĕ те... Юрĕ, çав хĕртсурт
Çинчен çырса хут варлас марччĕ халĕ.
Нарспи пек хĕр çинчен çырап хĕрсе,
Сăмахăм сарпике çинчен-ха манăн.
Вăл сан çине сăпайлăн тинкерсен
Тавралăха йăлтах, йăлтах эс манăн.
Хĕре пула ятне çырса хума
Ак эп те мантăм халь, эппин каçарăр.
Ун ячĕ — Синерпи (ман вăхăт калама).
«Кама-ши пÿрнĕ? Пулĕ шеплĕ арăм», —
Çапла ăна ырланă ваттисем,
Ача-пăча хăйне кура юратнă;

Ăшĕсенче вут хыпнă каччăсен,
Хăшпĕрисен, тен, чĕрисем ыратнă.
Вăл пурăннă амăшĕпе кăна...
Алла çурла тытса тырпул-и вырнă,
Тантăшсемпе çÿренĕ вăрмана,
Час-час серте татма çÿренĕ, ырнă.
Каçпа вăййа та тухнă Синерпи —
Яш чух этем лара-тăра пĕлет-и?
Пули-пулми пырса ан çыпăç пит,
Пăхса илет те — ун вăйне сисетĕн.
Кама телей парнелĕ сарпике?
Ял калашле, телей кама-ши пÿрнĕ?
Çакна вăл хăй те пĕлеймест иккен,
Анчах шанать, унпа вăл лайăх пурнĕ.

Хĕрсем тухаççĕ акă вăрмантан,
Хĕрсе такмак та юрă шăратаççĕ.
Паян яра куна вĕсем кунта
Пыл евĕр тутлă çĕр çырли татаççĕ.
Çырли нумай. Суйла çеç. Шултăра.
Тавралăха манса татма хистеççĕ.
Çырли çав тер сĕтеклĕ те вара! —
Чĕлхе çине хуран та — ирĕлеççĕ.
— Хĕрсем, пăхсамăр, туй-и ку килет? —
Мăн çул çине халь Синерпи тинкернĕ. —
Саратайран хăна килет-тĕр шет?
Такам, курсамăр, пар лаша кÿлтернĕ.
— Хуткупăсне тăсса пырать пĕри.
— Пĕкки çинчи шăнкăравĕ янăравлă.

— Мăн урампа иртеççĕ ав юри.
— Лакса тултарнă пулĕ — питĕ шавлă?
— Атьăр, чупар, хĕрсем, курма çитес.
— Синерписем патне-иç чарăнаççĕ!
Хĕрсем кунтăксене йăтаççĕ те
Ял еннелле хыпаланса чупаççĕ.

9.

Хĕр амăшĕ тĕпел кукăрĕнче
Çӳререĕ пăрчăкан пек унăн-кунăн.
Пикен куççуль тумлать куçĕсенчен,
Пĕлмен-илтмен çынна каяс-и унăн?
— Лăплан-ха, хĕрĕм, лăплансам, лăплан.
Каччи сăпай, хитре — мĕнех-ши кирлĕ?
Ху телейне эс тупăн унпалан,
Пурăнасса та пурăнаççĕ вирлĕ.
Авалтанпах пырать йăли çапла —
Çунат сарсан çич юталла вĕçет хĕр.
Ăна мĕнле-ха хирĕç пымалла?
Пиртен тухман, эпир мĕскер пĕлетпĕр?
Аçу çапла, мана илме пырсан
Каясшăн марччĕ эпĕ, хам та йĕтĕм.
Шăкăлтатса çеç пурăннă кайран...
Аçу мана шеллетчĕ çавă питĕ.
Анчах туйна курма пӳрмен ăна...
Шăпипеле телейĕ унăн çук-тăр.
Яппун вăрçи пуçланнăччĕ кăна —
Çухалчĕ вăл. Тăпри ун çăмăл пултăр...—

Чуна хĕссе тухан сăмахсене
Пӳртри ют çын пĕри те илтеймерĕ,
Татах сăйларĕç те хăнасене,
Пӳрт çеç вĕлле пек пăлханса сĕрлерĕ.
Укçа ыйтса юрлаççĕ, япала,
Пĕр шухăш патнелле пырса тухаççĕ:
«Сăмахĕ пултăр шанчăклă апла —
Шеп мăшăр пулĕ, пĕр-пĕрне тăраççĕ».
Каллех янрать тăрлавсăр шăнкăрав —
Пар ут каллех юртать, юртать вăл йăрă.
Ача-пăча шавлать çеç урамра,
Лав хыçĕнчен çил пек чупать çул тăрăх.

10.

Сулмаклă пĕлĕтсем карса илсен
Çĕре ислетнĕ пархатарлă çумăр.
Куçа шартса ялтранă тумламсем,—
Шур çип çине шăрçа пек тирсе хурăр!
Тӳпе чаршавĕ сирĕлнĕ часах,
Тĕнче вара çуталнă та тасалнă.
Лĕп çил кăна çӳренĕ лăпкаса,
Ăна, атте пек, ăшшăн ачашланă.
Çырла татмашкăн тухнă Синерпи,
Ăш çумăртан турат айне пытаннă.
Ĕнтĕ кукли те селĕм пулĕ пит,
Урпа сăри-çке чашкăрма пуçланă.
Хисеплĕ кун çывхарнă майĕпен.
Синерпие пăртак хăратнă туйĕ.

«Ялан килте пурнаймăп аннепе, —
Шутланă та — çуралнă ыpă туйăм. —
Çĕрме пуян ачи пулсассăн та
Ĕçчен пулас хăй, аллисем тĕреклĕ.
Куçĕсенче вут-хĕм йăлтăртатать,
Сăпай... Чĕлхи-çăварĕ те ĕретлĕ».
Çапла шутланă хăй каччи çинчен,
Ĕмĕтпелен хавaслăн çунатланнă.
Юлташĕсем е амăш сисиччен
Çырма хĕрне вăл аннă, тунсăхланă.
Ачалăха аса илсе çарран
Сукмакпала утма хавaслă, ырă.
Чĕре хĕлĕхĕсем вăраннăран
Юр юрласа е шăхăрса çеç пырăн.
...Ĕнтĕ хыçа юлать хура вăрман.
Сукмак лаша çулĕпелен пĕрлешрĕ.
Кунтах юхса выртать сĕвек çырма,
Хăва шыва-иç чуптуса илесшĕн.
Курман, сисмен çунатланса пырса —
Хыçа пырса тухать такам этемĕ.
Ак Синерпи пăхать те çаврăнса...
Эпти! Эпти тăра парать, атьсемĕр!
Кунта сасартăках тĕл пулнăран,
Шыв сыпнă пек пĕри те шарламарĕç.
Çырла чут тăкăнатчĕ кунтăкран,
Эпти те, темшĕн, тĕлсĕр мăкăртатрĕ.
Вĕри чĕри шаккарĕ Синерпин,
Хумханчĕ те вăл, савăнăç та туйрĕ.
Илтме пултарĕ йĕкĕт, тен... Эппин,

Ан тив тăнлатăр-иç, итлетĕр, юрĕ.
— Салам сана, хисеплĕ сарпике, —
Именчĕке сирсе Эпти каларĕ.—
Сирте хитре çырла нумай иккен,
Санран та хитрине чун тупаймарĕ...
Кĕрен сăн кĕчĕ Синерпи питне,
Именнĕрен пуçне пăртакçă усрĕ.
Эпти çывхарчĕ, пычĕ хĕр патнех,
Халь Синерпи ун ăшшине те сисрĕ.

Эпти

Пĕлместĕн эсĕ, хаклă Синерпи,
Чуна хĕлхем çунтарнине пĕлместĕн.
Ахаль пулсассăн акă килĕп-и,
Мана сума сăватăн, ĕненетĕн.

Синерпи

Тата кама-ха манăн ĕненес?
Мĕскершĕн эс мана çапла калатăн?

Эпти

Каçарăр та, чăнне пĕлсессĕн эс
Мана питрен пĕр шелсĕрех суратăн.
Çапах та тивĕç эпĕ калама,
Кĕтет пире инкек — тăшман хăрушă.
Сан умăнта халь айăп пысăк ман,
Али валли сана çураçнă... Пушă...

Сана çураçнă каччă — эпĕ мар,
Эп — чухăн сын... Атте-аннесĕр эпĕ!
Алса пек çĕрĕм пур тар кăларма,
Тырпул аксан ӳсет мăян — темтепĕр.
Картишĕнче ман выльăх-чĕрлĕх çук...
Кантуртисем килсессĕн — хып та çун...
Имет мана, тăрлавсăр, улталарĕ.
Ачи валли тесе, тумлантарса,
Хĕр çавăрмашкăн, путсĕр, тархасларĕ.
Кашни пике сурать лешне курсан,
Пымаççĕ яхăна — ялта пĕлеççĕ.
Ак халь вĕсем сынна улталаса
Кунта килсе илемлĕ хĕр илесшĕн...

Юпа пек хытрĕ Синерпи илтсен,
Çырлаллă кунтăкне алран ӳкерчĕ.
Эпти ăна ыталаса илсе
Çерем çине хĕрӳллĕн чĕркуçленчĕ.

### Эпти

Сана курсан хускалчĕ ман чĕрем,
Вăл хыттăн та пăчăртанса ыратрĕ.
Сана, сăпайлă та чипер хĕре,
Пĕрремĕш хут вăл пăлханса юратрĕ.
Халь эс мана ятла, хуть те мĕн ту,
Намăслантар мана — çакна эп тивĕç.
Анчах нихçан сипленмĕ юрату,
Чĕре çине хăварнă хыççăн сĕвĕ.

## Синерпи

Эй, пихампар, ху чуруна сыхла,
Çав курăнми серепене татсамччĕ!
Инкек-синкек ман чĕрене кăшлать,
Ăçта каяс, мĕскер тăвас, калаччĕ!
Çук, хапсăнмастăп эпĕ пурлăха,
Укçа тавраш пухас тесе çунмастăп.
Епле тӳсес ман çакă хурлăха?
Юратура кăна телей, чипер шутлас-тăк.

Çапла сăмах каларĕ Синерпи,
Эпти кăкри çине пуçне вăл хучĕ.
Каллех тавралăх хитреленчĕ пит,
Хĕвел те тӳпере хаваслăн кулчĕ.

## 11.

Туй, туй тесессĕнех çынсен умне
Тухса тăрать мăнаçлă ĕçкĕ-çикĕ.
Эрех-сăра çаврать этем пуçне,
Вăл ялйыша йăлт ӳсĕртмешкĕн çитĕ.
Тата ума тухса тăрать хăна,—
Çĕн мăшăрăн тăванĕ-хурăнташĕ.
Вара хаваслă юрă та юхать кăна,
Шăпăртатать кăна çăп-çăмăл ташă.
Хĕрçуммисем юрлаççĕ юрăсем
Е инкесем-и ал çупса юрлаççĕ,
Туй çыннисем пар лашасем кӳлсе
Урампалан унта-кунта кумаççĕ...

Синерпипе Эпти пĕрлешнĕ чух
Эрех-сăра таврашĕ тăкăнмарĕ.
Пÿрте кĕрсессĕн икĕ çамрăк чун
Никам хавасланă юрă юрламарĕ.
Кĕрекере лармарĕç хăнасем,
Шăпăр сасси-чĕвви те илтĕнмерĕ,
Çĕн мăшăра алкуменче кĕтсе
Никам, телей сунса, пехиллемерĕ.
Вĕсем иркÿлĕм кĕчĕç вăйăран,
Кÿрше-арша пачах та систермесĕр.
Килте Эпти асламăш çеç сыврать,
«Хуп турттарать» вăл, ахăр вырттнă мелсĕр.
Пÿрт ăшчикки кичеммĕн курăнать,
Хăюсăр хăйчикки мĕлтлетнĕ майăн,
Кăвар ÿкет те чашлатать кăна,
Йĕпе çатма çинче сÿнет салхуллăн.
Лутра сĕтел çинче ларать чÿлмек.
Кил хуçисем хавасллăн сĕвенеççĕ.
Тип çăкăра çыртса пыр йĕпетме
Вĕсем пĕр куркаран кăвас ĕçеççĕ.

12.

Ирхи хĕвел ахах-хĕлхемсене
Сапаласа пурне те савăнтарчĕ,
Вăрман тăррисенчен вĕçĕсене
Çыхса пин хĕлĕх евĕр карăнтарчĕ.
Пир тĕртнĕ чух çапла çыхса хурать
Çип карăмне ырма пĕлмен хĕрарăм.

Хĕвеллĕ кун пуласси не кура
Хресчен хирте ирех ĕçне пуçларĕ.
Саркайăксем çапаççĕ халь çунат,
Вĕсем хĕвеллĕ иршĕн хĕпĕртенĕ,
Ĕç патнелле хавассăн туртăнать
Ире пула ĕçчен алли этемĕн.
Имет паçăртанпах ура çинче,
Вăл яш чухнехи евĕр хĕпĕртенĕ.
Хаяр матки сасартăк сисиччен
Уç сывлăшпа пăртак сывлам-ха, тенĕ.
Туя хатĕрленет кил-çурт, туя! —
Питех те чаплă пулĕ унăн кинĕ.
Хăйне кăтартĕ-ха ун чух çĕрме пуян,
Унран ахаль-и хулăм укçи илнĕ?
Кăмăл тулнипеле Имет хавас,
Пĕр тапхăр вăл сада кĕрсе çӳрерĕ.
Тата ăçта каяс та мĕн тăвас?
Аптăраса пĕр ывăç татрĕ эрĕм.
Сукмак ертсе каять çăлкуç патне,
Пакăлтатать унта ик-виç хĕрарăм.
Тăхта-ха, асăнаççĕ ун ятне!
Эп ма-ха çав чакаксенчен хăрарăм?

Пĕрремĕш сасă

Шĕшлĕ аври тытса юлать Имет.
Пĕлетĕр-и — çĕркаç Эпти авланнă.
Хĕрне пĕр туйсăр илсе килнĕ, тет.

Иккĕмĕш сасă

Эп кӳршĕре пулса пĕлмен, ăнманнă!

Виççĕмĕш сасă

Ăна пĕркун çураçнă Иметсем,
Курпун валли кайса çураçнă пулнă.
Укçа парса та шуххăн илĕртсе
Эпти çине-мĕн пысăк шанчăк хунă.
Кайран лешсем чăнах пĕрне-пĕри
Юратнă тет...

Малтанхи сасă

Апла пулсассăн пырĕ.
Ахаллĕн ывăлĕ чĕрне хури
Тĕшне тăмасть.

Иккĕмĕш сасă

Чĕлхи пулсанччĕ ырă.

«Шапа пекех караççĕ çăварне», —
Имет инкесене питех çилленчĕ.
Калла çил пек вĕçсе пырса килне:
«Трахвин!» — тесе çине-çинех вăл чĕнчĕ.
— Мĕнле амак ыйха тататъ тата?
Ăçта, ăçта пушар, Имет Йăванччă?!

Каçарăр, кăтăш пулнă, тупата,—
Лупас çинче çывран Трахвин вăранчĕ.
— Эп парăп ак сана мĕнле амак!
Çынсем кулаççĕ! Панккавсем! Ну, тўсĕр!
Эс кўпчеме кăна пĕлен, ухмах,
Тăна кĕмест пуçу, ялан вăл ўсĕр.
— Каçарăр, айăплă, Имет Йăванч,
Лаша кĕтсе ĕшеннĕ... Ырă турă!
Ирпе ыйха хĕртмешкĕн пит аван,
Ĕçме — ĕçмен! Каçарăр, пуçăм — урă...
— Çăвар карса тăрас-и-ха тата!..
Чике тăршшех вĕт лартрĕç, пур-и сан ăс?!
Леш, сан Эпти тени, пиртен малтан
Синерпине илсе-çке килнĕ... Намăс!
— Синерпине? Пиртен малтан? Пастай!
Эпти питне кĕççе çĕленĕ ахăр.
Малтан укçа та сăптăрчĕ самай,
Халь хĕр иккен... Эс кур-ха: лăкăр-лакăр!
— Айта, Трахвин, кўлсем пар лашуна,
Кайса тăмписмене тăна кĕртетпĕр...

Ак пăртакран тăсланкă çилçунат
Урампалан вĕçтерчĕ тĕппĕр-теппĕр!

* * *

— Эпти, такам çĕр çĕмĕрсе килет,
Тусан кăна тусать. Пăхсам, кунта-тăр,—
Тет Синерпи. Хăй чĕтресе илет,
Эпти хулне ярса тытать вăл çатăр!

Чӳречерен тинкерчӗ те Эпти
Кам килнине пӗрре пăхсах чухларӗ.
— Çук, Синерпи, эс ан хăра халь тин,
Хăрушă мар мана тăшман каварӗ.
Ытах ун çурăмӗ кӗçӗтсенех
Шеп тип мунча кӗртмешкӗн çитӗ халăм...—
Кӗтсе илме чӗнмен хăнасене
Эпти тула васкавлăн тухрӗ халӗ.
Кӳме çитсе чарнать те çурт умне,
Трахвинпеле Имет сиксе анаççӗ.
Пăртак шаккаççӗ ларнă тусанне,
Хур аçилле пуç каçăртса пыраççӗ.
Çитсе тăраççӗ акă самантран.
— Тавси, — чӗнет Трахвин, сăмах тумалăх.
Çилли пытаннă çак йăвашлăхра,
Ăна Эпти туять халь питӗ лайăх.
— Шутларăн-мӗн алхапăл авланма,
Çӗн арăмпа мӗнле çӗр каçрăн, сурăх?
Эппин мана шутларăн хур тума?
Анчах асту! Пăхса тăмастăп урăх!

Укçа илсе те сăмакун кӳпсе
Мана кăтартрăн сăтăр, улталарăн.
Тăкаксене суд шыраса илсен
Мӗн калăн-ши ун чух? Итле, мăнтарăн!
Сана эп халӗ каçарма хавас,
Ху айăпна халь акă тӳрлетсессӗн.
Хӗре илсе каяс та — туй тăвас.
Шутла, Эпти... Айван, ача-ха эсӗ...

Çак йӗрӗнчӗк, хăруш сăмахсене
Эпти аран çеç итлесе пӗтерчӗ.
— Шăпланăрсам! — каларӗ вӗсене. —
Ман хăлхана юмахăр йӗрӗнтерчӗ!
Вăл темӗн хыпаларӗ кӗсйинче,
Унтан... укçа, укçа туртса кăларчӗ.
Лӳчӗркесе, йăваласа тинех
Хуçа ури айне пӗр вăркăнтарчӗ.
. . . . . . . . . . . . . .
. . . . . . . . . . . . . .
Тата мӗнле инкек килет киле,—
Куштан алли хăпма пӗлмест-çке — çилӗм.
Çӗн кин Эпти çине пăхса илет,
Леш ытамне илет ăна хӗрӳллӗн.
Кин куçӗ шывланать хурланнăран,
Вӗри куççуль хăрпăк çинче тăшларӗ.
Чӗтӗресе тăрсассăн, самантран
Эптин мăнаç кăкри çине тумларӗ.
— Лăплан, чӗкеçӗм, çирӗп чунлă пул.
Халь тин сана эп ют алла-и парăп!
Çук, кирлӗ мар мана ултавлă мул,
Лăпланччӗ, Синерпи, йӗмешкӗн чарăн.

**13.**

Урапа шăлтăртатать те,
Çӗкленет тусан.
Халӗ лайăх пулӗ питӗ
Çумăрӗ çусан.

Шалт! халтан ярать-çке шăрăх,
Çума шыв илмен.
Çавăнпа килет те тарăх,—
Иртенпе ĕçмен.
Ниепле ÿсмест-çке утăм,
Çăварта — тусан.
Лав çине тиенĕ утă,
Михĕсем хурса.
Лашасем пыраççĕ ретĕн,
Кăнтăр çитнĕ тин.
Хулара хальччен пĕрре те,
Çук, пулман Эпти.
Каçпала пырсаччĕ çакă
Кÿршĕ Лариван.
Вăл пĕлтерчĕ: «Тырă хакĕ
Хулара аван».
Тырă-пулă кăйттăрах та
Эптисен. Анчах,
Питĕ кирлĕ-çке укçа та,
Кĕсъесем пушах.
Хулана мĕнле-ха кайăн,
Пит начар лаша?..
Кÿршине тăнланă майăн
Путрĕ шухăша.
—Ак, пĕрле каятпăр, — терĕ
Ырă Лариван. —
Михĕсем эп хатĕрлерĕм,
Нумай мар вĕт ман.
Иккĕн çул кĕскелĕ, юрĕ, —

Килĕп ирхине.
Чĕререн Эпти тав турĕ
Хăйĕн кӳршине.
Тыткăна сасартăк илчĕ
Инçетри хула...
Ирхине ирех тапранчĕç
Кӳршĕсем çула.
Çула май пĕрле пĕрлешрĕç
Тата виçĕ лав.
Пĕр-пĕрне çынсем илешрĕç,
Халь пыраççĕ ав.
Каçа хирĕç йăлт ĕшеннĕ
Пирĕн лавçăсем.
Çĕр каçмашкăн ĕмĕтленнĕ
Лайăша çитсе.
Ак умра çав вырăс ялĕ,
Ялтăрать Сĕве.
Лашасем те ырнă халĕ,
Йĕпенет йĕвен.
Курăк вăрăм та сип-симĕс
Анлă улăхра.
Сĕве шывĕ тулăх шыв-мĕн,
Калăн ыйăхра.
Лариван пичче тăварчĕ
Ырнă кĕсрине.
Тăлласа кăларса ячĕ
Ешĕл ĕшнене.
Ак Эпти те килсе çитрĕ,
Салтăнчĕ те... Эх!

Çӳçенмесĕрех ялт! сикрĕ
Карлăк çинченех.
Кунĕпе ĕшеннĕ хыççăн
Çăвăнма аван.
Шывĕ тăрă та пит уçă,
Ырнине манан.
Лариван та питне çурĕ,
Халь ларать, канать.
Енĕрлет хаваслă юрă,
Кулкалать кăна.
Йăлăмра çĕр каçнă хыççăн,
Ирхине ирех,
Çула тăсрĕç умлăн-хыçлăн
Эптисем каллех.
Аякра шур тĕтĕм акă.
Чĕмпĕр-и элле?
Умрине йăлтах курмашкăн
Кансĕрлет шевле:
Малтанхи çуртсем курнаççĕ
Пăртакран умра.
Кантăксем куçа шартаççĕ,
Речĕпе — йăмра.
Лариван калать: — Шăп çавă,
Чĕмпĕр мал енче.
Ав мĕнле хула иккен вăл,
Питĕ те чечен.
Лариван унччен те пулнă
Çакă хулара.
Пĕлĕш вырăс пур-мĕн унăн,

Лайăх çын вара.
— Эс вăрах пулманччĕ, — терĕ, —
Тусăм, Лариван.
Сывлăха ыйтса тĕпчерĕ.
— Ерипен, аван...
Кĕтсе илчĕ питĕ ырă
Икĕ чăваша.
Картара кавлет тип курăк
Ывăннă лаша.
— Юлташу тата кам пулчĕ?
— Хамăр кӳршĕсем.
Кăмăлĕ Егорăн тулчĕ
«Кӳршĕсем» тесен.
Сăмавар та вĕреттерчĕ
Ырă арăмне.
Хистесех вăл чей ĕçтерчĕ
Хăйĕн ик тусне.
...Пасарта питех те йӳнĕ
Тулă-ырашсем.
Каялла леçме-и кӳнĕ
Йывăр михĕсем?
Çур хака сĕнсен те парăн,
Тăмăн туртăнса, —
Ĕнсене касать-çке парăм,
Ĕç пымасть ăнса.
Кил хуçи Егор тĕпчерĕ
Хваттере пырсан.
—Ĕç начар, юлташăм, — терĕ
Ырнă Лариван. —

Ӑнмасса эп шутламанччӗ,
Сутрӑм, апӑрша.
Ӗҫ начар, Егор Романччӑ,
Хресчене нуша.

Туссемпе ансат та мирлӗн
Пуплешме аван.
Кун пек чух аса мӗн килнӗ,
Ун ҫинчен палкан.
Акӑ халӗ те хускалчӗ
Тӗрлӗрен сӑмах.
— Пурнӑҫ питӗ йывӑрланчӗ, —
Тет Егор, — чӑнах.
Астӑватӑр-и хусамӑр,
Тусӑм, Лариван,
Юрлӑра * пурнатчӗ самӑр
Кулаков пуян.
Ҫын ҫӗрне вӑл туртса илнӗ,
Сывлама паман.
Ахаль мар ялйыш та чӗннӗ
Ятпа мар: «Пӑван».
Хирӗҫсен лӑплантармашкӑн
Тытнӑ саламат.
Кантура та юрамашкӑн
Пӗлнӗ хӑямат.
Хӗрсене ирӗксӗрленӗ,
Кӑмӑлне кайсан,

* Ял ячӗ.

Çавăнпа ялйыш эрленнĕ.
Çитнĕ тарăхса.
Пурнăçа лайăхлатмашкăн
Тархасласшăн мар,
Йăтса пынă харсăр ушкăн
Сенĕк те чукмар.
Пуяна чăл-пар! тустарнă.
Çуртне тĕртнĕ вут.
Хăй аран-мĕн тухса тарнă,
Вăл хресченшĕн ют... —
Ыйăх вĕçнĕ юмах евĕр,
Сăмаха пула.
Эптие те çамрăк темĕр,
Вăл та тем шутлать.

### 14.

Чăрсăр çилĕ тăхлан пĕлĕте хăвалать,
Шăхăрать çӳрен ут çилхи витĕр.
Шурă Чĕмпĕр юлать, шав юлать хыçала,
Инçетри сăрт хыçне пытансан куçран çĕтĕ.

Лариван лашине хистесе те илет:
— Пушăлла чуп кăна — çулĕ такăр,
Юрт, çӳренĕм, ан ыр, час çитерччĕ киле...

Сăмах çитнĕ пине, шăп пыраççĕ пĕр тапхăр.
Калаçас пеккине йăлт калаçнă тахçан.
Пĕçермест тек тӳпе — салхуланнă.

Çил кăна çӳпĕпе перкелет пит-куçа,
Урапа шăлĕсем силленеççĕ — пушаннă.

Инкеке-и сиссе — чун выртмасть, ăш вăркать.
Кăмăла, тен, хуçать сутнă тырă.
«Хăçанччен-ши нуша хресчене лутăркать?
Пурнăçа пурăнасчĕ телейлĕ те ырă».

Шăплăха хускатать чĕмсĕр пынă Эпти:
— Тек кун евĕр ăçтан-ха чăтайăн?!
Пиртен лайăх пурнать пуян çыннăн йытти,
Чухăнсем тĕнчере терт кураççĕ нумайăн.

Юрлăри маттурсем пек, хастарлăн тăрсан,
Чухăнсем çĕкленсессĕн пиншеррĕн,
Пуянсем, куштансем хăртаймĕç урса,
Лариван, эс асту-ха, Егор мĕн пуплерĕ...

Ак каллех лавçăсем калаçмаççĕ пĕр си.
Çил юртать, çил кумать уй-хир тăрăх.
Хăлхара шăхăрать ун илемсĕр сасси.
Киле майăн лаша та таптарчĕ-çке йăрă.

* * *

Тĕттĕм каç. Умра васан.
Уйăх каçăхнă куран.
Кунĕпе ларсан-ларсан
Эс ахаль те ывăнан.
Кăтăш пулнăччĕ Эпти

Урапа çине выртса.
Темиçе чĕнсессĕн тин
Сиксе тăчĕ васкаса.
Вăратать-мĕн Ларивaн:
— Инçе мар ял, çитрĕмĕр.
Мала пăх-ха, пăх аван,
Пушар мар-и? Пĕтрĕмĕр!
Ял çинче çĕкленчĕ вут,
Çути ўкрĕ пĕлĕте.
Юрт, лаша, çил евĕр юрт...
Ял тата мĕскер кĕтет?
Хĕрсе кайрĕ Ларивaн,
Хăвалать çеç лашине.
Тăван касă — çампалан
Хăпартать ун сехрине.
Шăлтăр-шалтăр пынипе
Ларивaн пĕртте сисмен,
Куç курмасăр тенĕ пек
Çынна кĕç лўчĕркемен.
Ăнсăртран леш пăрăнса
Юлчĕ сулăн хĕррине.
Вутă çутинче курса
Юлчĕ унăн карттусне.
Мĕн туса çўрет Трахвин?
Калăн темĕн хăвалать.
Пăхкалать пăлттин-палттин,
Пит хăравçăн пăхкалать.
— Мĕн туса çўрет, шуйттан,
Мĕн шырать тĕттĕм çĕрле? —

Мăкăртатрĕ Лариван, —
Йытă пек çӳрет, йĕрлет. —
Тăкăрлăкран пăрăнсан
Эпти ӳкрĕ хыпăнса.
— Пĕтрĕмĕр пуç, Лариван,
Кайрăмăр эпир çунса!
...Çулăм тăснă чĕлхине
Хăратса каçхи яла.
Асилет те Трахвине,
Тин Эпти йăлтах уйлать.

Пуç çине нуша ӳксен
Асра тыт туссен ятне,—
Çуртсăр юлсан, Эптисем
Куçрĕç Лариван патне.
Мăн суран та сипленет
Вăхăт иртсе пынă май.
Эпти аврĕ пилĕкне
Çĕнĕ çурт тума нумай.
Тупма йывăр пĕрене,
Çук укçа — çав хут татки.
Ӳссе ларчĕ кĕр енне
Тăмран тунă çурт пекки.

15.

Килйыш ларать ирхи апат тума.
Сăмах-юмах пырать çеç шăкăл-шăкăл.
Кивçен тупаççĕ кӳршĕрен юрма,

Касса хураççĕ чул пек хытă çăкăр.
Эпти асламăш те ларать кунта.
Ун ват чĕри паян ахаль-и сикнĕ,
Пĕртен-пĕрех мăнукĕ тăлăх та, —
Тавах турра, ÿссе çынна-çке çитнĕ.
Килкартинче каллех ура сасси,
Такам пĕр хушă çенĕкре шыранчĕ.
Тата мĕскер-ши юлнă курасси?
Килйыш каллех инкек кĕтсе шăпланчĕ.
Анчах та кам ку? Хĕсĕк алăкран
Пÿрте кĕрет старик. Çăра сухалĕ
Кăтраланать. Хăй пит ывăннăран,
Тăрать аран. Килйыш кĕтет—мĕн калĕ.
— Тавси! Тавси сана, тăван кĕтес!
Юратнă ват аннем! Чипер-и? —
Калать старик сăпайлăн. — Ман килес...
Каçарăрччĕ, çитменнине çитерĕр.

Эпти асламăшĕ каять халран.
— Кусма! Ачам... ачам, эсех-и çакă!
Те чĕрипе паллать вăл, те сăнран.
Йĕрет. Эпти калать:

— Ан макăр!

— Аçу, аçу-çке таврăнчĕ, Эпти,—
Чĕнет асламăш, сывлăш çавраймасăр.
Эпти ак вырăнтан хускалчĕ тин.
— Каçарăр та, эп паллаймарăм, ахăр...
— Эпти, ку эс-и?! — тĕлĕнет Кусма. —
Пăхсам: ман ывăлăм кĕреш пек пулнă!..

Пултараймарě мěскěн калаçма,
Пит тăрăх куççулли тумларě унăн.
Куçма кутамккине çĕре хурать.
Пăхсах чухлатăн — çул çинче ĕшеннĕ.
Кайран хĕрӳллĕн каласа парать —
Хальччен ăçта хăй çухалса çӳренĕ.
— Халь хама хам та ĕненес килмест,—
Ку тĕлĕкре-ши, чăн-ши — тĕлĕнетĕп.
Аннеçĕм, ĕнтĕ чарăн хӳхлеме,
Йӳçенкĕ эрлĕк капланса килсен те.
Мана ялтан ăсатрĕç Çĕпĕре.
Ал-урана сăнчăрсемпе тăлларĕç.
Аса илсен халь ыратать чĕре;
Ман пек шăпаллисем эп кăна мар-иç.
«Пăлхавçăсем», тесе пире юри
Элеклесе ăсатрĕç ял-хир урлă.
Çак тĕнчере касать патша пурри,
Ĕçри этем шăпи тасга та юрлă.
Кун хыççăн иртрĕ кун, çул хыççăн çул,
Кашни сехет пире туйнатчĕ тамăк.
Эпир çав хушăра шав каснă чул,
Тĕлĕнмелле. Çапах та тӳснĕ хамăр.
Киле ак килтĕм. Пытăм Тукаса.
Унта кил-çуртăмăн юлман-мĕн йĕрĕ.
Анкартинче мăян çеç сулланса
Ларать. Вăл халь такамăн çĕрĕ.
Сахал-и куртăмăр эпир хуйха...
Аса килет... Ялта курак нумайччĕ.
Турат çине йăва тăвать, çуйхать...

Эпир ун чух — ача, кашни айванччĕ.
Пĕррехинче Имет çарранланса,
Çатăрланса йăмра тăрне хăпарчĕ.
Карттус çине çăмартасем хурса
Куракăн йăвине чăл-пар! тустарчĕ.
Ун тĕлĕнчех вĕçет, вĕçет курак,
Вăй-хал пулсан — çапса, тĕксе антарĕ.
Хăй кранклатать кăна, пыма хăрать...
Каллех канмасăр вăл турат пуçтарĕ.
Тăратăп эп пўртларнă вырăнта.
Чĕре çине юлайнă çак ўкерчĕк
Аса килет. Йĕрес килет чунтан,
Ура çаплах мала утма ўркенчĕ...

Куçма кунта шăпланчĕ те пăртак,
Хăй чĕлĕмне каллех табак тултарчĕ.
Йўçенчĕк тĕтĕме çăтса пăк-пак!
Суранлă чĕрине кăшт лăплантарчĕ.

Куçма киле килсен, ял сыннисем
Сума суса курмашкăн килчĕç йышлăн.
Пĕççисене çапаççĕ тĕлĕнсе,
Кĕрсен аллисене тăсаççĕ чыслăн.
— Ăçта çухалтăн?
— Сывлăху мĕнле?
— Эпир сана вилнех тесе шутланă.
— Леш, Çĕпĕрех ăсатрĕç-и элле?
Пĕр сас-хура пулмарĕ те-иç санăн!
— Каласа пар пире, инçет енче

Тĕнче мĕнле халпа сывлать халь-хаççăн?
Унта епле шавлаççĕ çĕр çинчен?
Ялта пĕр куштансем хуçаланаççĕ.
— Çапла, этемшĕн ырлăх пулмаллах,
Çакна большевиксем шанса тăраççĕ.
Ăна вара йăлт хамăр тумалла,
Кĕрешӳре килет вăл халăх влаçĕ...
Ларать Эпти те, тимлесе тăнлать:
«Большевиксем» те «Халăх влаçĕ», «Ленин»...
Ялйыш пек мар ун ашшĕ, урăхла,
Никам илтмен çĕн сăмахсем вĕреннĕ.
Лутра çурта килет ватти-вĕтти.
Куçма хавас, ун куçĕсем хĕмленнĕ.
Пĕрре хăй ашшĕне пӳлсех Эпти
Тĕлĕннипе тĕпчерĕ: — Кам вăл Ленин?
Куçма пăртакçă тăчĕ шутласа,
Сăмах чĕнмерĕ чĕлĕм паккамасăр.
Унтан юлташĕ пек пăхса тăрса
Ăна çапла каларĕ васкамасăр:
— Ачам, итле эптин, ларсах калам.
Анчах сана мĕнле-ха ăнлантарăн?
Эс çак ята асра тытсан ялан
Умри пур тумхаха та парăнтарăн.

### 16.

Трахвин пӳрте çил пек вĕçсе кĕрет.
Ăна кĕтмен хыпар халь тĕлĕнтернĕ.
Вăл хуçине васкавлăн пĕлтерет:
— Имет Йăванч, ристан сывах-мĕн, килнĕ.

— Мĕнле ристан ҫинчен ваклан сăмах? —
Шур сухалне лăскать Имет пĕр ăстрăм.
— Леш, хай, мĕнле чĕнеччĕҫ-ха?.. Куҫма!
— Куҫма?
— Куҫма!
— Э-э-э, тинех астурăм.
— Тарса вăл килнĕ имĕш. Ҫĕпĕртен.
Паллах, ăна пуҫран шăлмаççĕ куншăн.
— Чим, вулăса ҫитсе килес-и, тен?
Кирлех пулсан укҫа пăртакçă чышăн.
— Эп илтрĕм-ха Куҫма ҫинчен хыпар:
Хурлать, тет, патшана, эккей, тăрлавсăр!
— Кала ҫакна та: чĕрĕ пул, вăр-вар;
Тĕнче касса-тăр ăслăланнă майсăр.
Ҫара ҫерҫи, пăсасшăн халăха...
Пăлхавçăсен шăпи — тĕрме те тамăк!
Эппин влаҫа та хирĕҫ ҫуйăхать,
Ҫук,ҫук, ăна эп иртĕхмешкĕн памăп.

## 17.

Сенкер тӳпе кĕленче пек таса...
Ялйыш хирте выратчĕ тырă-пулă.
Хăруш хыпар сасартăк сарăлса
Ҫынсен чĕрисенче хыптарчĕ ҫулăм.
— Вут-вăрçă хыпнă! Акă тамаша!..
Хĕрарăмсем хӳхлеççĕ урăм-сурăм.
Кашни яла ҫитмешкĕн тăрăшать,
Хĕвел ҫинче пиçмест тек пилĕк-ҫурăм.
Ҫурлаллă алăсем каяççĕ лаш!

Арçыннисен те пичĕсем салхуллă.
Çанталăкĕ — ĕçле кăна! — йăваш,
Çил хумĕпе сĕрлет сап-сарă тулă.
...Хура хĕреслĕ канвертсем ютран
Илсе килеççĕ-çке инкек те хурлăх.
Этем суранланать, çунать вутра...
Ялта та пурнăçĕ хресченĕн юрлă.
Салтак юрри çаплах янрать ялта,
Куллен хўхлет ача-пăча, хĕрарăм...
Чарăнасси те паллă мар малта,—
Вăрçи хăрушă тĕлĕк евĕр вăрăм.
Черечĕпе ят тухрĕ Эптие...
Хĕрарăмсем куççуль тăкма пуçларĕç.
Куçма лăплантарать:

— Инкек тиет
Пире çеç мар, пурне те вăрçă шарĕ.
Эпти, сана калатăп: асăрхан...
Яш вăй-хална ахаль сая ан яр эс;
Пире вăл малашне те кирлĕ-ха,
Этем çилли çавах йўçсе хăпарĕ...
Тантăшĕсем кĕреççĕ те пўрте,
Эпти сĕнет кĕрекере ыр вырăн.
Тĕрленĕ тутăрсем уртса пурте
Кĕç-вĕç юрлаççĕ чи салхуллă юрă.

13

Кĕрхи сив çил сап-сар çулçа лăскать,
Сив çумăрĕ лўшкет-çке кассăн-кассăн.
Мăн çулпалан утать салтак,васкать,—

Çил евĕр вĕçĕччĕ çунат пулсассăн.
Тен, пăт таять исленнĕ сăр шинель.
Урасене туртать чуста пек пылчăк.
Хавасланса пăхать çын ял енне,
Ăна мал ен асамлăн туртнă кăчăк.
Ак курăнать хăрах çунат-арман,
Ăна хуплană шур тĕтре чаршавĕ.
Тен, армана кичем пĕччен ларма?
Йăлăхтарать пуль сивĕ çумăр шавĕ?
Салтак аттисемпе лапра çăрать.
Тăван кил-çурт ăшши ăна таçтан туртать.
Сасартăк тайлăк пÿрт ума тухать,
Тăм пÿрт çумне сĕвеннĕ тăлăх сакă.
Шăнкăрч йăви те юлнă тăлăха...
Салтак тăван кĕтесĕ ĕнтĕ çакă.
Кивелнĕ алăка туртса уçса
Салтак кĕрет. Пăхать. Курать: хĕрарăм.
— Ах, турăçăм! — ярать леш кăшкăрса.—
Эпти, Эпти, сана аран палларăм!..

Хавхалану, куççулĕ хыçалта...
(Телейлĕ тĕлпулу килсе тухсассăн
Епле куççуль тăкмасăр эс чăтан?
Ăçтан тÿсетĕн сывламасăр ассăн?)
Сăмахсене йĕркеллĕ çыхиччен
Иртет самант, чылай çулталăк майлă.
— Эс, Синерпи, паян килте пĕччен.
Атте ăçта? — ыйтать Эпти васкавлăн.
— Атин пуçне-çке çирĕç иметсем...

Эс ăсансан ăна йĕрлерĕç питĕ.
Тытса та кайрĕç... Килчĕ чирлесе,
Ик эрнерен çĕре те кĕчĕ...
— Çитĕ...
— Тек асаннў те çуккă... Çав çулах,—
Капланнă хуйăха-ши чăтаймарĕ,—
Тен, турă сырнă шăпине пула,—
Чирлерĕ те, нумай та выртаймарĕ...
— Йăлтах ăнлантăм... Çитĕ, Синерпи.
Ыттисене каламасан та паллă.
Пĕччен кăна эс пурăннă эппин,
Анчах та пур-ха пирĕн çамрăк алă.
Чăтмаллисем нумаях мар тата...
Пĕлсенччĕ эс! Раççей çилли çĕкленнĕ.
Çĕн самана патне çул кăтартать
Чĕмпĕр сынни, пĕр ăслă вырăс — Ленин...
— Каллех каятăн-и вăрçа, Эпти? —
Пўлет ун арăмĕ, хăй кăшт шикленнĕ.
— Каятăп. Кĕрешў çĕкленнĕ тин,
Ăнланччĕ, Синерпи, пĕлсен — çилленмĕн.
Телей выртать-ха пирĕн сăпкара,
Юнать пире тăшман, итле, тăванăм.
Телей çўлтен ўкет-и-ха, ара?
Çын аллипе çĕн пурăнăç тăваймăн.

— Эппин, каях... Чармастăп эп тытса...—
Чĕнет çеç Синерпи хуллен, сăпайлăн
Эпти илет хĕрўллĕн чуптуса,
Ун аллисем ачаш та шелсĕр, вăйлă.

## ЭПИЛОГ

Каллех хӗлле, каллех тӑман улать,
Лутра пӳртре каллех тумтирсӗр сивӗ.
Хресченшӗн пултӑрччӗ ялан ҫулла,
Хӗлле ӑна хӗн-хур курмашкӑн тивӗ.
Вутти те кирлӗ, кирлӗ тумтирри,
Лаша валли ути сахал-и кирлӗ?
Пӳлмесенче те ҫӳхелет тырри,
Куштан тавраш ҫаплах пурнать-ха вирлӗ.
Анчах та терт вӑхӑтлӑха кӑна,
Ҫакна хресчен аван ӑнланнӑ халӗ.
Ӑна вӑратнӑ ҫӗнӗ самана,
Ҫӗн сывлӑшпа сывлать хули те ялӗ.
Ак ҫавӑнпа та халь Синерпине,
Чӳречерен сив ҫил кӗрет пулин те,
Хавасла, ӑшшӑн туйӑнать чунне,—
Ӑна килте лармашкӑн ырӑ питӗ.
Мачча кашти ҫинче юман пӑта,
Хуп сӑпкана ҫак пӑтаран ҫаклатнӑ.
Ман Синерпи сӑпайлӑн йӑпатать
Хӑй ачине. (Вӑл халь ача ҫуратнӑ.)
— Аҫу сан тухнӑ вилӗмлӗ вӑрҫа,
Совет влаҫне хастарлӑн сыхламашкӑн.
Ӗнен: каллех килет вӑл ҫаврӑнса,
Тӑшмансене туртса пӑвать те акӑ.
Унччен... унччен йӑлтах чӑтас пулать...—

Сăпка юрри юрлать çап-çамрăк арăм.
Ăна ăнланнă пек ачи кулать.
Амăш татах тăвать сунатлă çаврăм:
— Пĕлместĕн эсĕ халĕ нимĕн те,
Ӳссен ăна-кăна та лайăх чухлăн.
Çак сутă куншăн авалтан этем
Вĕри юнпа тар тăкнă темĕн чухлĕ...

Ача каять пит лăпкăн тĕлĕрсе.
Стена çинчен, ун ыйхине хӳтленĕн,
Пăхать сулпусĕ ăшшăн тинкерсе —
Хаçат çинчен касса кăларнă Л Е Н И Н.

Аслă Нагаткин,
1956—1969.

26 к.

